Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

85 (7725) № ✻ Шӑмат кун, 2009 ҫулхи октябрӗн (юпа) 24-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

**Ыран – Автомобиль транспорчӗн ӗҫченӗсен кунӗ**

## Малашне те аварисӗр ӗҫлесчӗ



***Автомашина пӗрремӗш кун мар ӗнтӗ пуянлӑх шутӗнчен тухса хӑвӑрт кусса ҫӳремелли тата ӗҫсене вӑхӑтра пурнӑҫлама пулӑшакан хатӗр пулса тӑчӗ. Анчах руль умӗнче ҫӳресси те – пысӑк ответлӑх. Ҫакна 41 ҫул водительте ӗҫлекен Сергей Александрович Суриков лайӑх пӗлет. Пӗтӗмӗшле ӗҫ стажӗн тӗп пайне ӗҫ ӗмӗрӗнче аварисӗр ӗҫленӗшӗн патшалӑх ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗнчен икӗ хутчен дипломсене те тивӗҫнӗ хастар ӗҫчен.***

***Чылай ҫул йывӑр тиевлӗ автомашинӑсемпе инҫе ҫулсене ҫӳренӗскер, халӗ 6-мӗш ҫул ӗнтӗ тӑван хуҫалӑхра ПАЗ-3205 автобуспа ӗҫлет. 1975 ҫултанпа «Оринино» хуҫалӑхра вӑй хураканскер, паян районӗнех чи пуян опытлӑ водительсенчен пӗри. Апла пулсан шоферсен кунӗ те уншӑн профессилле пысӑк уяв. Сывлӑх пултӑр санӑн, Сергей Александрович! Ҫулу тикӗс килтӗр те пур ҫӗрте те вӑл усӑ пултӑр!***

А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.

**АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧӖН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМПЕ ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире хӑвӑрӑн професси уявӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп. Предприятисемпе организацисен ӗҫӗ-хӗлӗ сирӗн кулленхи тӑрӑшуллӑ ӗҫӗрпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Кирек хӑш отрасльте ӗҫлесен те хӑвӑрӑн тивӗҫӗре кирлӗ пек пурнӑҫлатӑр. Чылай чухне кӑткӑс условисенче вӑй хуратӑр. Районӑн социаллӑ-экономика аталанӑвӗшӗн ырми-канми тӑрӑшатӑр.

Водительӗн чи пахи вӑл - ҫул тикӗс те йӗркеллӗ пулни. Юлашки 2 ҫул хушшинче ку енӗпе пысӑк ӗҫсем туса иртертӗмӗр. Кашни ял патне йӗркеллӗ ҫулсем турӑмӑр. Республика ҫулӗсене юсассипе те нихҫанхинчен анӑҫлӑрах ӗҫлерӗмӗр. Ҫакӑ вара ҫул ҫинчи хӑрушлӑха чакарма май парать, автотранспортпа усӑ курассин шанчӑклӑхне палӑрмаллах ӳстерет.

Эсир малашне те хӑвӑрӑн тивӗҫӗре чун-чӗре хушнӑ пек тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫласса, тимлӗх пирки пӗр самантлӑха та манмасса шанас килет. Хӑвӑрӑн йӑнӑшма юраманнине, ӗҫӗр вуншар, ҫӗршер ҫын пурнӑҫӗпе сыхӑннине малалла та асрах тытӑр. Пурнӑҫра сирӗн сывлӑх, ӗҫре ӑнӑҫу, ҫемьере килӗшӳ сунатӑп.

Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.

## Транспорт уйрӑмах тимлӗх ыйтать

***Автомобиль транспорчӗпе ҫӳрекенсен ответлӑхӗ епле пысӑк пулни пурне те паллӑ. Вӗсем вара пассажирсене илсе ҫӳреҫҫӗ пулсан – пушшех те.***

***Муркашра тӗрлӗ маршрутсемпе пассажирсене илсе ҫӳрекен «Никита» автостанци 2001 ҫулта уҫӑлчӗ. Куллен 14 транспорт хатӗрӗ 8 маршрутпа ҫула тухать халӗ. 22 водительпе 4 диспетчер вӑй хураҫҫӗ кунта. Пурте вӗсем хӑйсен тивӗҫне ответлӑха туйса пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ. Пассажирсен ырӑ ятне тивӗҫни – чи кирли-ҫке.***

***Автотранспорт предприятийӗ пенсионерсем, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсемпе инваличӗсем валли тӑтӑшах тӗрлӗрен маршрутсемпе тӳлевсӗр рейссем йӗркелет. Ҫакӑншӑн та пысӑк тав сӑмахӗ калаҫҫӗ вӗсем.***

***Сӑн ӳкерчӗкре эсир автостанци ӗҫченӗсене Алевтина Хлашева, Надежда Васильева, Альбина Никитина диспетчерсене, Виталий Киселев, Игорь Пикузов, Геннадий Иванов водительсене, автостанци ертӳҫине Иван Никитина куратӑр.***

В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.



**Ыйтӑм**

## Эфирта – наци радио

Чӑваш наци радио ӗҫлеме пуҫланине ял ҫыннисем хапӑлласа йышӑнчӗҫ.

Ҫӗнӗ радио передачисене ирхи 6 сехетрен пуҫласа 23 сехетченех итлеме пулать. Радиоприемнике 105 Fm хумсем ҫине ҫавӑрмалла ҫеҫ. Е тата влаҫ органӗсен официаллӑ порталне (www.cap.ru.) кӗмелле.

Чӑваш наци радио пирки уйрӑм ҫынсен шухӑш-кӑмӑлне пӗлме тӑрӑшрӑмӑр.

**Л. ТАРАСОВА, район администрацийӗн пай ертӳҫи:**

– Чӑнах та, наци радио ӗҫлеме пуҫланине эпӗ тулли кӑмӑлпа йышӑнтӑм. Вырӑнсене тухсан яланах ял ҫыннисем: «Хӑҫан чӑваш радио ӗҫлеме пуҫлать?»- тесе ыйтатчӗҫ.

Радио халӑха яланах ҫывӑх пулнӑ. Ялти кашни килтех репродукторсем ҫакӑнса тӑратчӗҫ. Халӗ передачӑсем хумсем урлӑ килеҫҫӗ. Ҫавна май приемниксем кирлӗ. Ҫынсене кун пирки анлӑрах ӑнлантарсан наци радионе итлекенсен йышӗ палӑрмаллах ӳсессе шанатӑп.

Манӑн ытларах ял ҫыннисен пурнӑҫӗ, вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен каласа паракан передачӑсем итлес килет.

**Н. НИКОЛАЕВА, ҫамрӑк специалист:**

– Наци радио передачисем мана килӗшеҫҫӗ, ҫӑмӑллӑн итленеҫҫӗ. Кӑткӑс ыйтусене те ӑнланмалла чӗлхепе каласа пама тӑрӑшни сисӗнет.

Август уйӑхӗнче аслӑ шкулсем ҫинчен передачӑсем эфира тӑтӑш тухрӗҫ. Вӗренме кӗрекен ҫамрӑксене вӗсем пысӑк пулӑшу кӳчӗҫ тесе шутлатӑп.

Ҫамрӑксем тенӗрен, наци радио вӗсем ҫине пысӑк тимлӗх уйӑрать. Манӑн паянхи яш-кӗрӗме шухӑшла яракан передачӑсем эфира кӑларма сӗнес килет. Вӗсене хӑйсен ҫул-йӗрне тупма пулӑшмалла, ума ҫирӗп тӗллевсем лартма вӗрентмелле.

**В. ФЕДОРОВ, Муркаш лицейӗнчи истори учителӗ:**

– Наци радио эфира тухни - питӗ пӗлтерӗшлӗ пулӑм. Ҫак ӗҫе маларахах тумалла пулнӑ.

Шел, пур ҫӗрте те тытма ҫук унӑн передачисене. Лицейра, ялта итлетӗп эпӗ ӑна. Анчах киле ансан итлеме ҫук. Радиоприемник те улӑштарса пӑхрӑм, усси пулмарӗ.

Чӑваш историн, культурин ыйтӑвӗсене анлӑрах хускатма ыйтас килет.

**Вӗрентӳ**

## Юнкӑ шкулне – ҫӗнӗ автобус

Ҫак эрнере С. Михайлов ячӗллӗ Юнкӑри вӑтам шкула ҫӗнӗ ПАЗ 32053-70 автобуспа тивӗҫтерчӗҫ.

Ӑна шкул ачисем январь уйӑхӗнченпех чӑтӑмсӑррӑн кӗтнӗ. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнчи кӑтартусемпе мала тухнӑ 8 класс ачисем шкул автобусне кӗтсе илме Шупашкара ҫитсе килчӗҫ. Вӗсене Чӑваш Республикин вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министрӗ Г. Чернова та саламларӗ.

**Цифрӑсен чӗлхипе**

## Вӑтам ӗҫ укҫи

Муркаш районӗнчи пӗчӗк предпринимательство субъекчӗ шутланман организацисенче ӗҫлекенсен кӑҫалхи январь-август уйӑхӗсенчи вӑтам ӗҫ укҫи 8374 тенкӗпе танлашнӑ. Ку иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртипе танлаштарсан 100,3 процент чухлӗ. Асӑннӑ организацисенче пурӗ 5801 ҫын ӗҫлени паллӑ. Ҫакӑ пӗлтӗрхин 95,0 процентӗпе танлашать.

Палӑртнӑ тапхӑрта ӗҫ укҫине тӳлеме пӗтӗмӗшле 393 миллион та 238 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Ку хисеп – пӗлтӗрхи тапхӑртин 95,5 проценчӗ.

Чӑваш Республикинчи вӑтам ӗҫ укҫи, Чӑвашстат пӗлтернипе, январь–август уйӑхӗсенче 11153 тенкӗпе танлашнӑ. Иртнӗ ҫулхинчи кӑтартуран 1,9 процент пысӑкрах.

Август уйӑхне уйрӑм илес пулсан, республикӑри ӗҫ укҫин вӑтам кӑтартӑвӗ – 11356,2 тенкӗ (пӗлтӗрхин 98,4 проценчӗ чухлӗ).

**Хӗллехи вӑхӑт ҫине куҫатпӑр**

## Пӗр сехет ытларах ҫывӑрӑпӑр



**Ҫитес вырсарни кун каҫхине пӗтӗм ҫӗршывӗпех ҫынсем сехет йӗпписене пӗр сехет каялла куҫарнӑ май ытларах ҫывӑрма пултараҫҫӗ.**

Ученӑйсем палӑртнӑ тӑрӑх, вӑхӑта куҫарнӑ май чылай ҫынсен йӗркеллӗ ҫывӑрасси пӑсӑлать. Тӗрӗссипе пӗр сехет «хушса пăраҫҫӗ» пулин те. Унччен пекех ҫывӑрасси ҫинчӗмӗш куна кӑна йӗркеленсе ҫитет. Ҫавӑнпа та унччен эсир 7 сехетре ҫывӑрса тӑнӑ пулсан, пӗр-ик кун хушши 6 сехет ҫурӑра вӑранни те темех мар.

Ытларах чухне ҫынсем десинхронозпа аптӑраҫҫӗ, вӗсен хаваллӑхӗ пӑсӑлать. Пӗрремӗш паллӑсем ҫаксем: хӑвӑрт ывӑнаҫҫӗ, сӳрӗклӗх, кӑмӑлсӑр пулни. Сӑлтавсӑрах вар-хырӑм тата чӗре ыратма тытӑнаҫҫӗ, юн пусӑмӗ «выляма» пуҫӑнать. Енчен те ҫын сакӑр сехетре апатланма хӑнӑхнӑ пулсан, ҫӗнӗ вӑхӑт ҫине куҫнӑ май унӑн вар-хырӑмӗ е апат ыйшӑнма хатӗр мар, е выҫлӑх «пӑлхавне» пуҫлать. Каҫхи апата ниепле те кӗтсе илейместӗр пулсан, вар-хырӑма лӑплантарса илме пулать. Анчах та гамбургерпа мар, пан улмипе тата пӗр стакан кефирпа. Енчен те эсир начарланас тетӗр пулсан, сехет йӗпписене куҫарни – диета ҫинче «лармалли» лайӑх сӑлтав.

Сехет йӗпписене куҫарма вӑхӑт ҫитиччен юлнӑ кунсенче контрастлӑ душ кӗме, сӗткенсем ӗҫме, пӗҫернӗ тата шаритленӗ апат-ҫимӗҫе сахалрах ҫиме тӑрӑшӑр. Нерв тӗлӗшӗнчен йӗркелӗхе тивӗҫтерме элеутероккок, женьшень, китай лимонникӗ, аралии, родиола настойкисене ӗҫме пултаратӑр. Куллен сӗлӗ пӑтти, шултра авӑртнӑ ҫӑнӑхран пӗҫернӗ ҫӑкӑр, кишӗр, курага усӑллӑ пулӗҫ. Вӗсем чӗре мышцисене лайӑхрах ӗҫлеме пулӑшаҫҫӗ. Тухтӑрсем вара уйрӑмах С витаминсем ҫак тапхӑрта усӑллӑ пулнине палӑртаҫҫӗ.

Стресс пачах ан пултӑр тесен, ҫак тапхӑрта лӑпкӑ мелодиллӗ музыка итлеме тӑрӑшӑр. Паркснче усӑ сывлӑшра уҫӑлса ҫӳрени те вырӑнлӑ. Ку тапхӑрта кил ӑшшине туйни паха. Ҫавӑнпа та хӑвӑрӑн ҫемье блюдине хатӗрлесе каҫхи апат йӗркелӗр, хӑвӑрпа пӗрле юлташсене пухӑр, сывӑх ҫынсем патӗнче пулма тӑрӑшӑр.

**9 уйӑх итогӗсем**

## Строительство

Иртнӗ тӑхӑр уйӑхра строительствӑра инвестицисемпе пӗтӗмпе 275549 пин тенкӗлӗх усӑ курнӑ. Ку вӑл пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑтрин 82,3 проценчӗ чухлӗ пулать. Ҫав вӑхӑтрах уйрӑм ҫынсем инвестицисемпе усӑ курасси 10,4 процент ӳснӗ, 266392 пин тенкӗпе танлашнӑ.

Строительство объекчӗсем пӗтӗмпе 275549 пин тенкӗлӗх (109,4 процент) хута янӑ. Вӑл шутран уйрӑм ҫынсен хӑйсен вӑйӗпе хута янӑ ҫуртсем 266392 пин тенкӗлӗх (110,4 процент) шутланаҫҫӗ.

Районӗпе пурӑнмалли ҫурт-йӗр тӑвасси ӳссе пырать. Кӑҫал ҫулталӑк пуҫланнӑранпа пӗтӗмпе уйрӑм ҫынсен 71 ҫуртне 16022 тӑваткал метр чухлӗ хута янӑ. Иртнӗ ҫул ку хисеп уйрӑм ҫынсен 68 ҫурчӗпе тата 18400 тӑваткал метрпа танлашнӑччӗ.

**Саламлатпӑр**



Сыпай яланче пурӑнакан **Галина Алексеевна ЯШКОВАНА** октябрӗн 25-мӗшӗнче 62 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тухакан ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Эпир сана юрататпӑр, сана тав туса сан умӑнта ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, сурпан пек вӑрӑм кун-ҫул, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал, лӑпкӑ пурнӑҫ сунатпӑр.

**Саламлакансем: хӗрӗпе кӗрӳшӗ, ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем, юратнӑ мӑшӑрӗ.**

Уважаемый **ГЕННАДИЙ ПЛАТОНОВИЧ**!

Коллектив ООО «Моргаушкорм» горячо и сердечно поздравляет Вас с 60-летним юбилеем.

Желаем вам крепкого здоровья, счастья, удачи, финансового и семейного благополучия.

**С уважением коллектив ООО «Моргаушкорм».**